В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Собрание депутатов Юськасинского сельского поселения решило:

1. Назначить выборы главы Юськасинского сельского поселения Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Юськасинского сельского поселения С.Н. ИВАНОВ.**

**Окончание на 4 стр.**

# Экономика тĕреклĕхĕ – пĕрле вăй хунинче

**Районта иртнĕ пĕчĕк тата вăтам предпринимательство кунĕнчен**



Хуçалăх экономики, предприяти аталанăвĕ, пĕрле пулса ыранхи куна пăхни. Пурин хыçĕнче те ĕç тăрать. Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн ĕçлени. Çак çыхăну Муркаш енре аслăрах ăрусем пуçарнипех тачă хутшăнура. Çĕр-шыв рынок хутшăнăвĕсен çулне суйласа илнĕ май юлашки çулсенче районта пĕчĕк тата вăтам предпринимательство хăйне туллин кăтартма пуçларĕ. Анчах экономика хутшăнăвĕсен çĕнĕ тытăмĕнче те татса паман ыйтусем, пĕрле пулса тумалли йышăнусем çук мар-ха. Çакна курсапĕлсе тăрса иртнĕ кĕçнерни кун, утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче, район администрацийĕ Муркаш енре пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра ĕçлесе тăван тăрăх экономикине тĕреклетессипе вăй хуракансен кунне ирттерчĕ.

Çак кун пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра вăй хуракансем пĕр çын пек пулса Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи «Илем» кафен пĕчĕк залне пухăнчĕç. Вĕсемпе иртнерне тĕл пулăва тĕрлĕ сфера специалисчĕсем, банкирсем хутшăнни усă калаçу пĕлтерĕшне ÿстерчĕ. Çакна тĕл пулăва уçнă тата ертсе пынă май район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертÿçи В.А. Калинин та палăртрĕ.

Район администрацийĕн экономика пайĕн ертÿçи Э. Симакова тĕл пулура туса панă докладра районти пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕ яр уççăн куç умне тухрĕ.

Районăмăр экономикин аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство палăрăмлă вырăн йышăнать. Уйрăмах хушма ĕç вырăнĕсем туса парассипе. 2010 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн енре пĕчĕк тата вăтам предприятисем 129, уйрăм предпринимательсем 895, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 90, ял хуçалăх производство кооперативĕсем 16 шутланнă. Вĕсенче районти ĕçлекенсен вăтам хисепĕн 25 процентĕ ĕç вырăнĕ тупнă: 2800 çын. Отраслĕсен структуринче ял хуçалăхĕ тĕп вырăнта – 32 процент, суту-илÿпе обществăлла апатлану – 30 процент, услугăсем парасси – 19 процент, промышленность производстви – 18 процент, строительство – 2 процент.

Районта «Пĕчĕк хуçалăх формисене 2007-2011 çулсенче аталантарасси» программа ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пырать. 5 çул хушшинче пĕчĕк предприятисене аталанма финансласси пĕтĕмпе 156 миллион тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран район бюджечĕн салук сĕмĕпе пурĕ 15,220 миллион тенкĕ кайнă. Ку вăл çулсерен 3-шер миллион тенкĕпе танлашать. Пĕчĕк харпăрлăх формиллĕ субъектсем 2010 çулхи январь-июнь уйăхĕсенче 109 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Пĕтĕмĕшле калăпăшăн 24 процентĕ. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсенче пулнă вăтам ĕç укçи 7580 тенкĕ.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарма пулăшусем тĕрлĕ енлĕ. Уйрăмах илнĕ кредитсен процент ставки малта тăрать. Паян ку пулăшупа пĕчĕк бизнесăн 3 представителĕ усă курать. Вĕсен процент ставкине республика бюджечĕнчен субсидилеççĕ.

Муниципаллă программăсене патшалăх пулăшăвĕ парассипе «Пĕчĕк предпринимательство ĕçне кÿлĕнекенсене хăйсен бизнес пуçарса яма грандсем парасси» йĕркепе районти пĕчĕк бизнесăн 3 представителĕ республика бюджечĕнчен кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 100-шер пин тенкĕ выляса илнĕ. Вĕсемсĕр пуçне тепĕр икĕ предприниматель çак пулăшăва федераллă бюджетран кĕтет.

Пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене консультаци, информаци, йĕркелÿпе методика пулăшăвĕ парассипе 2008 çултанпа бизнес-инкубатор ĕçлет. Унăн ĕçĕ-хĕлĕпе пухăннисене «Республикăри бизнес-инкубатор» ертсе пыракан компани представителĕ паллаштарчĕ.

Финанспа экономика кризисне пăхмасăрах районта потребительсен рынокĕ малалла аталанать. Юлашки вăхăтра çеç суту-илÿпе обществăлла апатлану предприятийĕсем 9 уçăлнă. Вĕсем 21 ĕç вырăнĕ туса панă.

Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăш районĕпе иртнĕ çулхинче 15 процент (285 миллион тенкĕлĕх) пысăкланнă пулсан, пĕчĕк бизнесăн унти тÿпи 17,2 процент.

Пĕчĕк бизнес представителĕсем район тата республика шайĕнче иртекен тĕрлĕ конкурссене тăтăшах активлă хутшăнаççĕ. Çапла вара кăçал республикăра иртнерне «Тавар туянакансен ыйтăвĕсене укçасăр (пластик карточкăсемпе) тивĕçтерессипе чи лайăх ĕçлекен» конкурсра Муркашри «Универмаг» чикĕллĕ яваплăхлă общество (ертÿçи В. Бардасов) 3-мĕш вырăн йышăнчĕ. «2010 çулхи çамрăк предприниматель» конкурсра вара «Бизнесăн çамрăк маçтăрĕ» номинацире Мăн Сĕнтĕрти Елизавета Ивановна Иванова 2-мĕш вырăна тивĕçрĕ.

Мăн Сĕнтĕрти «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (ертÿçи – Л.Г. Ильгечкин) республика шайĕнчи пĕр конкурсран та юлмасть. Ку предприятире пурнăçа кĕрсе пыракан çĕнĕлĕхсемпе канашлăва хутшăннисем вырăна тухса паллашрĕç. Предпринимательсемшĕн çавăн пекех Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă «Потап» пĕчĕк предприятире (ертÿçи – Е.И. Иванова) пулса курни те ĕçлес текенсем пĕр вырăнта ларманни курăнчĕ.

Ĕçлеме тăрăшни, çĕнĕлĕхсемпе паллашсах тăни лайăх-ха, анчах канашлăва хутшăннисем районта çĕнĕ технологисене алла илсе пурнăçа кĕртекенсем, конкуренцие хирĕç тăма пултаракан продукци çителĕксĕртерех кăларни палăрнине йышăнчĕç.

– Тулашри рынока тухма инновации активлăхне ÿстермелле – çакă районти предпринимательсем умĕнче тăракан тĕп задача. Эсир çакна пултаратăр. Мĕншĕн тесен Муркаш районĕ республикăшăн кирек хăш ĕçре те яланах тĕслĕх пулса тăнă. Çакăн пек канашлу ирттерни тата унта пурне те хумхантаракан ыйтусене хурав пама тăрăшни савăнтарать. Район администрацийĕн йышăнăвне предпринимательсем айккинче хăварманни те сирĕн пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна сумлăрах аталантарма çул уçă пулнине çирĕплетет, – терĕ пĕчĕк тата вăтам предпринимательство кунне хутшăнса Чăваш Республикин Экономикăпа суту-илÿ министерствин предпринимательствăпа ал ĕç аталану пайĕн пуçлăхĕ С. Ефимова «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă май. Вăл калани пирĕн предпринимательсемшĕн тухăçлăрах ĕçлеме чĕнĕнĕх туйăнчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкĕсенче: районти пĕчĕк тата вăтам бизнес представителĕсем «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕпе паллашнă вăхăт.**

# Вырма вут-кăварпа ан «туслаштăр»

**Çĕнĕ çăкăр тата пушар хуралĕ: маларах калани вырăнлă**

***Кăçалхи пек вăрăма тăсăлнă шăрăх кунсем хресчен асĕнче çук тесен те вырăнлă. Çавна май ял хуçалăхĕ тÿсекен çухатусем те кашнин куçĕ умĕнчех. Çакă мĕн туса илнипе перекетлĕрех пулма, асăрхану мелĕсене ÿстерме ыйтать. Уйрăмах вырма пуçланнă май. Шăрăх çанталăкра пушар хăрушлăхĕ малти вырăнта. Иртнĕ çул утă уйăхĕн 19-мĕшĕ тĕлне пирĕн тăрăхра пулнă 23 пушарта çĕршер-çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех пĕр çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ пулсан, кăçал та инкексен хисепĕ 23-не çитрĕ тата урĕке кайнă çулăмра пĕр çынна çухатрăмăр.***

***Шăрăх кунсене пула килсе тухнă чрезвычайлă лару-тăрăва пула тÿсекен çухатусемпе пĕрлех тавралăх çĕнĕ тыр-пул илемĕпе, унăн техĕмлĕ шăршипе тулчĕ. Куратпăр, вăхăт утти хăйĕннех тăвать.***

***Хирти пÿлмери мар. Çакна çĕр ĕçĕпе пурăнакан çын ачаран ăша хывать. Урăхла пулаймасть те. Вырма – çĕр ĕçченĕшĕн чи ответлă тапхăр. Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ÿстернĕ пур-çук тырă-пулăна çухатусемсĕр пуçтарса кĕртесси – ку чухне кашнин тĕп тĕллевĕ.***

Вырма пуçлансан республикăра çуллене хире тухнă техника, тырă типĕтмелли агрегатсем, типĕтсе янтăланă утăулăм, тырă склачĕсем çунса кĕлленнĕ тĕслĕхсем пулаççĕ. Çакă малашлăха пăхса ĕçлекен, «Агропромышленноçа аталантарасси» приоритетлă наци программине пурнăçласишĕн тăрăшакан çĕр ĕçченĕшĕн – хăрушла ÿкерчĕк. Кунашкалли район территорийĕнче те çук мар. «Хĕрлĕ автан» тухнин сăлтавĕсем çултан-çул пĕрешкел майлах сыхланса юлни хытах шухăшлаттарать. Вĕсем: вырмара усă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни, ĕçе хутшăнакан техникăна пушар сÿнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ комплектламанни, çиçĕм çапасран хÿтĕленменни, электрооборудование юсавлă тытманни, тырă типĕтмелли агрегатсене температура датчикĕсемпе тивĕçтерменни (çак сăлтавпа çуллене тырă типĕтнĕ вăхăтра вуншар тонна тырă çунса кĕлете кĕреймесĕрех юлать) тата ытти те. Çаксене курса-пĕлсе тăнă çинчех ял хуçалăх производство кооперативĕсенче тата продукци тирпейлекен предприятисенче çĕнĕ тырă пухса кĕртнĕ вăхăтра пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ калание-асăрхаттарнине шута хуманнине кашни çулах куратпăр, анчах… Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем вырмана тухрĕç те ĕнтĕ. Анчах çакă мĕн туса çитерейменни çине алă сулмаллине пĕлтермест. Пушар хăрушлăхĕ хĕрÿ ĕç çирен катара тăтăр тесен çĕр ĕçченĕн ĕнер туса çитерейменнине паян пурнăçлама тăрăшмалла. Вырмана хутшăнакансене – хуçалăхсен ертÿçисемпе специалисчĕсене, механизаторĕсемпе рядовой ĕçченĕсене – паян çакăн пек сĕнÿсем парас килет:

1. Кая юлман-ха, вырмана хутшăнакан ял хуçалăх техникине тата тырă типĕтмелли комплекссене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ хыççăн специалистсемпе ытти яваплă çынсенчен йĕркеленĕ комисси ятарлă актпа йышăнсан çеç ĕçе кĕртме юрать.

2. Вырмана хутшăнакан техникăна пушарпа кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпе нормăпа палăртнă чухлĕ комплектламалла. Çак тĕллевпе кашни комбайн, машина-трактор, хирти е йĕтем çинчи агрегат çинче иккĕрен кая мар огнетушитель, икĕ кĕреçе, шăпăр, ятарлă ещĕкре хăйăр, ятарлă шăнăçра шыв пулмалла. «Хир карапĕсене» пушар сÿнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ чухлĕ комплектламанни хуçалăхсемшĕн уйрăмах хакла лармa пултарать.

3. Вырма тапхăрĕ тырăпа пĕрлех улăмпа та пуян. Çак тапхăрта ăна вăхăтра пуçтарса кĕртме те техника йышлă хутшăнать. Çавăнпа та ку ĕçе двигательсен глушителĕсем çине хĕм сÿнтерекен устройствăсем вырнаçтарман техникăна кăлармалла мар.

4. Хĕрÿ ĕç çине хутшăнакансемпе тăтăшах пушар хăрушсăрлăх правилисемпе инструктажсем ирттермелле, вĕсене пушарпа пуçламăш самантра тĕрĕс кĕрешме вĕрентмелле.

5. Хиртен, улăх-çарантан пуçтарăнса кĕлете, капан-урана кĕнĕ тырă-пулă, утă-улăм упранакан вырăнсенче, складсемпе ампарсенче усă хурал тăратассине йĕркелемелле.

6. Çĕнĕ тырă упранакан тата ăна тасатса-аласа типĕтекен вырăнсенче усă куракан электричествăпа ĕçлекен техника хатĕрĕсене вĕсемпе ĕçлеме сирĕплетнĕ яваплă çынсен тĕплĕ тĕрĕслесе йышăнмалла. Вĕсемпе ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх йĕркисене, пушар хăрушсăрлăх правилисене, ĕç технологине çирĕп пăхăнмалла.

7. Вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинче хуралçăсем тытасси пирки манмалла мар. Кунта ĕçлекенсем валли пирус туртмалли ятарлă вырăн, алă айĕнчех хăйăрпа шыв, огнетушитель пулмалла.

Напольнăй сушилкăсем пирки çуллепех асăрхаттарса тăратпăр пулин те, чылай хуçалăхра вĕсене генераторсенчен кирпĕч стенапа уйăрма васкамаççĕ, ГСМ юхнине «асăрхамаççĕ». Йĕтемсем çинчен калаçнă май, кунти тепĕр çивĕч ыйту вăл – çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсем çине çителĕксĕр тимлĕх уйăрни. Йĕтем çине илсе пынă тырă-пулăна вăхăтра типĕтсе ĕлкĕрейменнипе вăл хĕрсе каять, çакă çиçĕм çапас хăрушлăха нумай хут ÿстерет. Çавăнпа та çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсене кая юлмасăр çук çĕрте лартмалла, юсавсăррисене юсамалла.

8. Вырмари тепĕр ответлă ĕç вăл – улăм пуçтарса тирпейлесси. Темех мар темелле, анчах кунта та пушар хăрушсăрлăх правилисене тĕп вырăнта тытмасан инкек алăк умнех пырса тăрать. Çак çултан пăрăнас тесен типĕ улăм патĕнче пирус туртассинчен асăрханмалла, улăм урисене пурне те пĕр çĕре вырнаçтарассинчен хăтăлмалла, вĕсене электропередача линийĕсенчен 15 метртан, çулсем хĕррипчен 20 метртан, çурт-йĕр таврашĕнчен 50 метртан кая мар инçĕшнерех вырнаçтармалла. Утă-улăм хранилищисен алăкĕсене тăтăшах хупса тăмалла.

Куратпăр, пĕлетпĕр, ăнланатпăр, вырмари пушарсем пĕри те ăнсăртран тухмаççĕ. Апла пулсан пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçлени çеç çичĕ хут тар юхтарса ÿстернĕ тырă-пулăна тата утă-улăма çухатусемсĕр пухса кĕртме, сыхласа хăварма май парать.

**А. ЕФИМОВ,**

**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыраканĕ.**

# Хисеплĕ сывлăх хуралçи

**Районăн паллă çыннисем**



– Эпир ĕçленĕ вăхăтра врачсем сахалччĕ. Хальхи пек вăйлă оборудовани те пулман. Анчах та эпир наркоз та тĕп-тĕрĕс панă, юн та янă. Чирлĕ çынна сиплес тесе пирĕнтен мĕн килнине пĕтĕмпех тунă. Васкавлă пулăшу уйрăмĕ пулман вăхăтра та ĕçлеме тӳр килчĕ. Пире вара, врачсене, талăкăн хăть те хăш вăхăтĕнче те пулăшу пама чĕнетчĕç. Каймасăр тăман, – çапла аса илет паян хăйĕн ĕç вăхăтне тивĕçлĕ канури Вера Алексеевна Ильина.

1935 çулта Шурча ялĕнче кун çути курнă хĕр шкул пĕтерсен Хусанти медицина институтне вĕренме кĕрет. Ултă çул теори тата практика енĕпе пухнă ăспа каялла Муркаш çĕрĕ çинех таврăнать. Çапла 1958 çулхи август уйăхĕнчен хăйĕн ĕç биографине Муркаш район больницинче çырма пуçлать. Çамрăк специалиста тӳрех тĕп врачăн санитарипе эпидемиологи енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма шанаççĕ. Кулленхи ĕçри хастарлăхпа тăрăшулăх вара тепĕр вунă çултан Вера Алексеевнăна тĕп врач «туса хураççĕ». Çак йывăр та ответлă ĕçре ку таранччен пухнă опыт питĕ кирлĕ пулать.

1972 çултанпа Вера Алексеевна тĕп врачăн сиплев енĕпе ĕçлекен çумĕнче вăй хума тытăнать, кăшт каярах – терапевтра. Хăйĕн должноçне тепре те улăштарма тивет унăн: 1985 çултанпа участокри терапевт врачĕ пулса мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен çак ĕçре вăй хурать, чылай çынна пулăшать. Анчах ответлăха туйса ĕçлеме хăнăхнă сывлăх хуралçи пур должноçра та чирлисене май пур таран пулăшас тесе пĕтĕм вăй-халне парса ĕçленĕ. Ĕçтешĕсемпе – врач-и вăл е сантехник – яланах пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ. Çакăншăнах пысăк хисепре пулнă вăл. Хисепĕ вара паян та чакмасть: ырă сĕнӳ-канаш ыйтакансем килсех çӳреççĕ опытлă медицина ĕçченĕ патне. Вĕсем хушшинче чирлисем те, ĕçри специалистсем те.

Вера Алексеевна «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçни те ăнсăртран пулнă утăм мар. Ĕçне кура унăн наградисем те нумай: Совет Союзĕн Аслă Канашĕн Укзĕпе панă «Хисеп палли» орден та, «Ĕçре палăрнăшăн» медаль те, тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисем те...

Тĕп ĕçпе юнашар вара общестăлла ĕç те пĕрлех пулнă: Вера Алексеевнăна райсовет депутатне темиçе йыхравра та суйланă. Çынсем хисепленипе, шаннипе çыхăннă ĕнтĕ çакă.

Таврари хисеплĕ тухтăрăн çулĕпе унăн тăванĕ А.А. Алексеева та кайма шутланă. Вăл хальхи вăхăтра участок терапевчĕ пулса тăрăшать. Районти фтизиатр О.В. Михайлова та унăн çывăх тăванĕ. Вера Алексеевнăн мăнукĕ вара Чăваш патшалăх университечĕн медицина институтĕнче вĕренет. Çакă, паллах, савăнтарать.

Паян вара, июлĕн 21-мĕшĕнче, Вера Алексеевна шăпах хăйĕн 75 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çывăх тăванĕсен саламĕсем çумне хутшăнса эпир те ăна çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Официально

**(Окончание. Начало на 2 стр.).**

*Решение Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-42/2*

**О назначении выборов депутатов Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Юськасинского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Юськасинского сельского поселения решило:

1. Назначить выборы депутатов Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Юськасинского сельского поселения С.Н. ИВАНОВ.**

*Решение Собрания депутатов Ярославского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-32/1*

**О назначении выборов главы Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Ярославского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы главы Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**И.О.главы Ярославского сельского поселения Т.Н. ЗАПОЛЬСКАЯ.**

*Решение Собрания депутатов Ярославского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-32/2*

**О назначении выборов депутатов Собрания депутатов Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Ярославского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы депутатов Собрания депутатов Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**И.О.главы Ярославского сельского поселения Т.Н. ЗАПОЛЬСКАЯ.**

*Решение Собрания депутатов Тораевского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-30/1*

**О назначении выборов главы Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Тораевского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы главы Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Тораевского сельского поселения А.В. ПАВЛОВ.**

*Решение Собрания депутатов Тораевского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-30/2*

**О назначении выборов депутатов Собрания депутатов Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Тораевского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы депутатов Собрания депутатов Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Тораевского сельского поселения А.В. ПАВЛОВ.**

*Решение Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-37/1*

**О назначении выборов главы Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Хорнойского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы главы Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Хорнойского сельского поселения В.А. ЛЮБИМОВА.**

*Решение Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения от 16 июля 2010 года № С-37/2*

**О назначении выборов депутатов Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**В соответствии со статьей 10 Федерального Закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 5 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Хорнойского сельского поселения Чувашской Республики** Собрание депутатов Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики РЕШИЛО:

1. Назначить выборы депутатов Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 10 октября 2010 года.
2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.
3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Хорнойского сельского поселения В.А. ЛЮБИМОВА.**

**ЦЕНТРАЛЬНАЯ ИЗБИРАТЕЛЬНАЯ КОМИССИЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**

**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**

**15.07.2010 г. № 58/406-IV**

**г. Чебоксары**

**О заявлении членов Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Сорокиной Валентины Клементьевны, Тарасовой Лилии Юрьевны**

В соответствии с пунктами 6, 11 статьи 29 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и на основании заявлений членов Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Сорокиной Валентины Клементьевны, Тарасовой Лилии Юрьевны Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики п о с т а н о в л я е т:

1. Освободить Сорокину Валентину Клементьевну от обязанностей члена Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.
2. Освободить Тарасову Лилию Юрьевну от обязанностей члена Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.
3. Предложить политическим партиям, иным общественным объединениям, представительным органам Моргушского района, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок не позднее 22 июля 2010 года представить в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики предложения по кандидатурам в состав Моргаушской территориальной избирательной комиссии.
4. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Заместитель Председателя Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики А.И. ЦВЕТКОВ.**

**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 38-38.**

* * *

**Хăмăр тĕслĕ висĕ çулхи чупнă кĕсре сутатпăр. Тел.: 8-927-997-92-41.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

* * *

**Нашедшего черную сумку с документами, прошу вернуть за вознаграждение. Тел.: 8-927-848-21-51.**

* * *

**Декабрьте иккĕмĕш пăруламалли шурă-хура тĕслĕ ĕне сутатăп. Адресĕ: Йӳтĕркасси ялĕ, Новая урам, 7-мĕш çурт.**

* * *

**Предприятие продает щебень фр. 40-70 М 1000 и песок строительный в любом количестве с Шешкарской пристани. Имеется возможность доставки до потребителя. Тел.: 8-927-669-26-10, 8-927-669-26-02. 4-8.**

* * *

**Магазин «Лотос» (д. Рыккакасы) реализует: профнастил оцинкованный – 210 руб. за 1 пог. м.; профнастил крашеный – 250 руб. за 1 пог. м.; профиль 40х20 – 50 руб. за 1 пог. м.; трубы для столбов на ограду, диаметром 60 мм, толщиной 5 мм – 120 руб. за 1 пог. м.; стека-рабица – от 500 рублей (10 метров в рулоне). Тел.: 8-917-665-27-26. 1-5.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 2-8.**


* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060801:120, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Большие Татаркасы, ул. Пакшандаева, для индивидуального жилищного строительства, площадью 1989 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:101001:117, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринииское сельское поселение, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:101001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3500 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

## Линии электропередачи являются источником повышенной опасности

## Вниманию сельхозпроизводителей и механизаторов

В настоящее время, во многих районах Республики приступили к уборке зерновых и зернобобовых культур, заготовке корма для скота.

В условиях засушливой погоды, с наступлением периода высоких температур, серьезную опасность для работы сетевого комплекса Республики представляют даже незначительные возгорания вблизи линий электропередач и энергооборудования. Повреждения высоковольтных и низковольтных электрических сетей вызывают перерыв в обеспечении электроэнергией городов, населенных пунктов, промышленных и сельскохозяйственных предприятий, приводят к несчастным случаям с людьми и пожарам, наносят экологический ущерб.

Чтобы предотвратить неприятные последствия, **Филиал ОАО «МРСК Волги» - «Чувашэнерго»** напоминает Вам, что в охранных зонах, установленных для объектов электросетевого хозяйства напряжением свыше 1000 вольт, **запрещается** складирование любых материалов, в том числе горюче-смазочных; размещение полевых станов; производство земляных работ на глубине более 0,3 метра (на вспахиваемых землях на глубине более 0,45 метра), а также планировка грунта (в охранных зонах подземных кабельных линий электропередачи); полив сельскохозяйственных культур в случае, если высота струи воды может составить свыше 3 метров (в охранных зонах воздушных линий электропередачи).

**Помните**, что оборванные и провисшие провода ЛЭП представляют опасность для жизни. **Запрещается** приближение к опорам ЛЭП, имеющим оборванные провода, на расстояние менее 20м.

**Механизаторы!**

Не допускайте наездов автотехники и тракторов на опоры ЛЭП! В охранных зонах воздушных линий электропередачи **запрещается** проезд машин и механизмов, имеющих общую высоту с грузом или без груза от поверхности дороги более 4,5 метра, а также производство полевых сельскохозяйственных работ, связанных с вспашкой земли, с применением сельскохозяйственных машин и оборудования высотой более 4 метров.

**Запрещается** стоянка и ремонт комбайнов, автотракторной и другой сельскохозяйственной техники в охранных зонах ЛЭП. При вынужденной остановке ни в коем случае не поднимайтесь на кабины и площадки техники, во избежание попадания под напряжение.

**Филиал ОАО «МРСК Волги» - «Чувашэнерго»** просит Вас не допускать возникновения чрезвычайных ситуаций, быть бдительными и ответственными при угрозе возникновения пожаров. Обо всех замеченных Вами нарушениях, возгораниях, угрожающих электрическим сетям, и при обнаружении оборванных проводов ЛЭП обращайтесь по адресам:

**1. Северное производственное отделение, г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 13, тел. 8 (8352) 56-29-73.**

**2. Южное производственное отделение, г. Канаш, ул. Железнодорожная, д. 267А, тел. 8 (83533) 2-14-74.**

**3. Алатырское производственное отделение, г. Алатырь, ул. Гагарина, д. 19., тел. 8 (83531) 2-33-89.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 20.07.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3871.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.